Калайкассинче – эксперт комиссийĕ

Хăйсен ĕçне тивĕçлипе пурнăçлаççĕ

Юлашки çулсенче районти вĕрентӳ учреждениййĕсен ĕçне чылай çĕнĕлĕх хутшăнчĕ. Çакă вара вĕрентӳ ĕçĕ çине çĕнĕлле пăхма, унăн пахалăхне ӳстерме хистет. Шкулăн тытăмне çĕнетсе улăштарни те ачасен тĕрлĕ енлĕ аталанăвĕ çине ырă витĕм кӳрет.

Пирĕн района виçĕ ресурс центрĕ шутланать. Вĕсенчен пĕри – Калайкассинчи вăтам шкул. Шăпах çакăнта килсе çитрĕç те эксперт комиссийĕн членĕсем февралĕн 1-мĕшĕнче. Вăл шутра ЧР вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт министрĕн çумĕ М.Ю. Толстов, «Интурист» генеральнăй директорĕ В.И. Федотов, Катькас ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Г.Г. Лебедев, ашшĕ-амăшĕсен комитечĕн ертӳçи Н.В. Андреев, унăн çумĕ Е.Т. Краснова, район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн ертӳçи Л.И. Мочалов, И.Я. Яковлев ячĕллĕ ЧППУ искусствоведени кандидачĕ, музыкăн теорипе методикăн кафедрин доценчĕ С.В. Ильина. Хисеплĕ хăнасене Калайкассинчи вăтам шкул директорĕ И.В. Осипова кĕтсе илчĕ.

Калайкасси шкулĕ хĕвел тухăç вĕрентӳ округне кĕрет. Шкулăн обществăлла экспертиза кунне районти çурçĕр, хĕвел тухăç ытти вĕрентӳ учреждениййĕсен ертӳçисем тата çамрăк вĕрентекенсем пухăннă.

Чăваш Республикин Президенчĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн Калайкасси шкулĕ 200 пин тенкĕлĕх гранта тивĕçнĕччĕ. Çакă ачасене воспитани парас, инноваци ĕç-хĕлне тата пултарулăх пуçарăвне аталантарас тĕлĕшпе палăртнă утăм пулчĕ. Гранта оборудовани туянма, вĕрентӳ ĕçченĕсен квалификацине ӳстерме, вĕрентӳ пособийĕсем туянма уйăрнă. Çакă вара вĕренекенсене тулли те тарăн пĕлӳ пама май парать.

Вĕрентӳ ĕçне çĕнĕлĕхсем кĕртессипе ĕçлеме пултарнă В.Т. Моисеев физкультура учителĕ РФ Президенчĕн парнине – 100 пин тенкĕне тивĕçнĕ. Вăл та çӳлерех асăннă шкулта тăрăшать. Çавăн пекех «2006 çулхи чи лайăх класс ертӳçи» конкурса хутшăнса Т.А. Ершова 3-мĕш вырăна тивĕçнĕ. Вĕсемсĕр пуçне шкулта татах та пысăк çитĕнӳсем пур. Вĕрентӳ сферинчи наци проекчĕ çĕнĕлле ĕçлекен шкулсемпе пултаруллă вĕрентекенсене малалла аталанма пулăшать.

Çĕнĕлĕхсемпе паллашас тĕллевпе уçă уроксем икĕ секципе ĕçлерĕç. Пĕрремĕш секци «Шкул – шкула» ятпа ĕçлерĕ. «Чăваш Республикин тытăмĕ тата символĕсем» темăна Е.Е. Ерагин 5-мĕш класра вĕрентрĕ. «Программирование на языке HTML» информатика урокне Т.А. Ершова 9-мĕш класра ертсе пычĕ. «Подготовка к ЕГЭ. Итоговая аттестация» тренинга Л.В. Ванюшкина педагог-психолог ăнлантарчĕ.

Иккĕмĕш секци «Вĕрентекен - вĕрентекене» ятпа иртрĕ, ăна В.Т. Моисеев физкультура учителĕ ертсе пычĕ. Уроксенче пулнă май ачасем чылай çĕнĕлĕхе алла илни курăнать. Кунтах интерактивлă доска та пур. Çакă вара ачасемшĕн питĕ меллĕ. Районта икĕ вĕрентӳ учреждениййĕнче кăна усă кураççĕ унпа.

Шкулта историпе краеведени музейĕ ĕçлет. Унти экспонатсемпе чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ, чăваш наци конгресĕн членĕ Е.Е. Ерагин паллаштарчĕ. Музей пуянлăхĕ комисси членĕсене те тĕлĕнтерчĕ.

Шкулăн тепĕр пысăк çитĕнĕвĕ вăл – «Хыçалти парта» хаçат тухса тăни. Унăн ĕçне А.М. Степанов йĕркелесе пырать. Хаçат кун çути курма пуçланăранпа вăхăт нумаях та иртмерĕ, унăн ячĕ вара, тĕлĕнмелле пулин те, Польшăна та çитме пултарчĕ.

Вĕрентӳ ĕçĕнчи наци проекчĕн тепĕр енĕ вăл – вĕрентӳ ĕçне ертсе пыраççинче гражданла обществăн институчĕсене хутшăнтарас механизма йĕркелесси. Çакăнта вара обществăлла органсем хутшăнаççĕ. Чылай шкулти пекех, Калайкасси шкулĕнче те попечительсен канашне йĕркеленĕ. Муркашри чăхчĕп фабрикин директорĕ Н.Г. Ванеркин, попечитель пулнă май, шкулти чылай пысăк ĕçе хăйĕн сине илнĕ. Çавăн пекех В.С. Рубцов предприниматель те шкул ĕçĕпе кăсăкланать, пулăшу парать. Обществăлла орган шутне вĕрентекенсемпе аслă классенче вĕренекенсем, вĕсен ашшĕ-амăшĕсем тата общественноç представителĕсем кĕреççĕ. Çаксем шкулсем бюджет тата бюджет тулашĕнчи укçатенкĕпе епле усă курнине контроллеççĕ, çавăн пекех аслă классем валли профиллĕ вĕрентӳ суйланă çĕре те хутшăнаççĕ. Çапла вара чи лайăх вĕрентӳ учреждениййĕсене суйласа илес тĕллевпе иртрĕ обществăлла экспертиза кунĕ.

Р. АЛЕКСАНДРОВА.

Căн ӳкерчĕкре: С.В. Ильина музей ĕçĕпе кăмăллă; 11 «п» класс ачисем психологи урокĕнче.

Автор căн ӳкерчĕкĕсем.

Ял тăрăхĕсен кунĕсенчен

Ял çыннине чылай ыйту канăçсăрлантарать

Ял тăрăхĕсен кунĕсем хыçа юлчĕç. Палăртнă ĕçĕн пĕрремĕш пайĕ вĕçленчĕ темелле. Иккĕмĕш пайĕ вара çак хĕрӳ тапхăрăн пĕтĕмлетĕвĕ пулĕ. Районти ответлă ĕçченсем ĕçе çакăнпек йĕркелени, ял çыннисен кулленхи пурнăçĕпе интересленни питĕ вырăнлă пулнине палăртрĕç ял тăрăхĕсенче. Çакă январĕн 30-мĕшĕнче Юнкă ял тăрăхĕнче пулса иртнĕ пĕрлехи каласуран та курăнчĕ.

Пухăва Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ С.В. Ермаков уçрĕ. Çулталăк хушшинче пурнăçланă ĕçсемпе паллаштарчĕ. Чăнах та, сахал мар ĕç туни курăнать. Анчах та татса паман ыйтусем лăпланса ларма памарĕç вырăнти ĕçченсене. Çавăнпа та ыйту хыççăн ыйту хускалчĕ. Уйрăмах çул-йĕр тăвасси, хĕллехи вăхăтра ăна юртан хырса тасатасси, çавăн пекех шыв пăрăхĕсене хурасси, юсавлă тытса тăрасси хĕрӳ калаçу кăларчĕ пухура.

Ял тăрăхĕнче 2104 çын пурăнать. Ку кăтарту пысăккисен шутĕнче. Анчах та тĕп больницăна çитмесĕр вырăнта сиплев курсĕ ирттерме май çук. Çитес вăхăтрах кунта пĕтĕмĕшле практика врачĕн офисĕ уçăлмалла, кунтах 2-3 вырăн кăнтăрлахи сиплев валли пулмалла. Çакăн пирки тĕп больницăн тĕп врачĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ В.Г. Данилов пĕлтерчĕ.

Пĕлтĕр çут тĕнчене 2005 çулхинчен 8 ача сахалтарах килнĕ. Ёмĕрлĕхех уйăлакансем вара 3 çын ытларах пулнă. Çавăн пекех вĕренекенсен йышĕ те чакни шухăшлаттармалла пек туйăнать.

Çынсем килти хушма хуçалăха аталантарма тăрăшни сисĕнет. Çакна валли 36 çын 4155,2 пин тенкĕ кредит илнĕ. Кунта Сергей Васильевич ырă тĕслĕх вырăнĕнче пулса тăрать.

Ку тăрăха килсен, «Новая Юнга» хуçалăхăн тулли уйхирĕсем анлă Атăл евĕр сарăлса выртатчĕç, сарайĕсем выльăх-чĕрлĕхпе тулличчĕ. Анчах та, шел, паянхи кун çав ӳкерчĕк пирĕн умра çук, ытла та хыçа тăрса юлчĕ курăнать. Халĕ хуçалăхăн пĕр сарайĕнче А.В. Матвеев фермер 180 пуç сысна ĕрчетет. Çĕнĕ ăратăпа ĕçлес тесе хамăр республика тулашĕнчен хĕрлĕ тĕслĕ сысна açисем илсе килнĕ. Кунта çĕнĕ технологи çине куçни курăнать. Сыснасем тăнă клеткăсем çине сухан лартнă пысăк ещĕксем вырнаçтарнă. Çак фермăра тăваттăн ĕçлеççĕ. Ытти ял çыннисен ăçта ĕçлемелле-ши? Тата çур аки те хăй пирки систерет. Пысăк калăпăшлă уй-хире кам тата мĕн акĕ-ши? Иртнĕ çул А.В. Матвеев фермер пухса илнĕ пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсен пĕр гектар çинчи вăтам тухăçĕ 7,8 центнерпа танлашнă. Фермер хуçалăхĕнчи вăтам кăтарту районĕпе 10,5 центнер пулнă. Пахча çимĕççен районти вăтам тухăçĕ 97,0 центнер пулсан, кунта вара пĕр гектар çинчи тухăç 14,6 центнерпа çеç танлашать. Вырăнти ĕçченсене ял хуçалăх производствинчи лару-тăру шухăшлаттарать, тарăхтарать. Вĕсем йĕркелĕх, саккунлăх кĕтеççĕ.

Юнкă ял тăрăхĕнчи ял çыннисем валли ĕçлеме май туса паракан тепĕр предприяти вăл - «Вита» сĕт-çу цехĕ. Кунта 20-е яхăн çын вăй хурать, хăйсен ĕçĕпе кăмăллă. Укçа-тенкĕпе вăхăтра тивĕçтереççĕ. Хатĕр продукцие те вăхăтра вырнаçтарма май тупаççĕ.

Ял тăрăхĕнчи тепĕр организаци вăл – МСО «Моргаушская». Унăн ертӳçи тата депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.В. Коротников организацие паянхи рынок тапхăрĕнче ура çинче çирĕппĕн тытса тăни сисĕнет. Çавăнпа та ял çыннисем вăл е ку пулăшу кирлĕ пулсан унта каяççĕ. Халĕ те, ав, пухăва пуçтарăннисене пĕве пĕвелес, выльăх масарне кирлĕ пек тытас ыйтусем хумхантарчĕç. В.В. Коротников пулăшма шантарчĕ. Тĕрĕссипе вара чылай ĕçе пĕрле татса пама тăрăшнă. Çавна район администрацийĕн пуçлăхĕ панă Тав хучĕ те çирĕплетет.

Çĕр пайĕсене харпăрлăха куçарасси питĕ вăрах пырать, мĕншĕн тесен чылайăшĕ улталаннă, тивĕçлĕ документсене алла илеймен. Халĕ ку ыйтупа прокуратура ĕçлет.

Р. ИЛЛАРИОНОВА.

Căн ӳкерчĕкре: «Вита» сĕт-çу цехĕнче ĕçлекенсем; В.В. Коротников Тав сăмахне тивĕç.

Радиохум – хаçат страницинче - «Ыйту пур. Хуравне пĕлесшĕнччĕ»

Çĕнĕлĕхсем татах та пур

2007 çул чылай çĕнĕлĕхпе килсе кĕчĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕринпе эсир хаçат страницисенчен паллашрăр ĕнтĕ. Çĕнĕлĕхсем социаллă страховани енĕпе те пулса иртрĕç. Çав шутран ачана пăхма паракан пособие палăртассипе тӳлессине те пырса тиврĕç вĕсем. Шăпах çакăнпа çыхăннă ыйтусем çинче чарăнса тăма ыйтрăм та ĕнтĕ эпĕ Чăваш Республикин Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă аталану министерствин пирĕн районти социаллă хӳтлĕх пайĕн ертӳçинчен Н. П. ПЕТРОВАРАН.

– Чи малтанах çакăн пирки асилтерес килет: РФ Социаллă страховани фондĕнчен ача пур çемьесене малтан та йывăр çын пулнăшăн тата ача çуратнăшăн паракан пособие, çие юлсан кĕске вăхăтрах медицина учрежденине кайса учета тăнăшăн пĕр хутчен паракан пособие тата ача çулталăк çурăна çитиччен пăхма паракан пособие парса тăнă. Ку вăл паян та çаплах. Çак пособисене пурне те обязательнăй майпа страхланнă çынсене тӳлеççĕ. Страхланнисене (ĕç килĕшĕвĕпе ĕçлекенсене) çӳлерех асăннă тӳлевсене ĕç вырăнĕнчен тӳлеççĕ.

2007 çултан пуçласа вара ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхма паракан пособие РФ Социаллă страховани фондĕнчен илекенсен йышĕ татах та ӳсрĕ. Вĕсен шутне çаксем кĕреççĕ:

–очно майпа пуçламăш, вăтам тата аслă профессиллĕ пĕлӳ паракан вĕрентӳ учреждениййĕсенче тата аслă вĕренӳ заведенине пĕтернĕ хыççăн профессиональ паракан вĕрентӳ учреждениййĕсенче вĕренекенсем;

– йывăр çын пулнă чух, йывăр çын пулнăшăн тата ача çуратма паракан отпуск вăхăтĕнче, çавăн пекех ача пăхнă тапхăрта организаци пĕтернине пула ĕçрен хăтарнисем; уйрăм предприниматель ĕçне чарнине пула ĕçсĕр юлнă предпринимательсем, нотариуссем, адвокатсем;

–обязательнăй майпа социаллă страхланман (ĕçлемен) амăшĕсем е ашшĕсем, е опекунсем кĕреççĕ, енчен те вĕсем ачана çулталăк çурăна çитиччен пăхаççĕ пулсан.

Ачана пăхма паракан пособие е вĕреннĕ çĕртен, е пурăнакан вырăнти социаллă хӳтлĕх органĕсенче параççĕ. Çакна асра тытмалла: ĕçлемен гражданасене ачана пăхма паракан пособие вĕсем ĕçсĕр пулнăшăн паракан пособие илмеççĕ пулсан çеç параççĕ.

–Асăннă категорисен ачана пăхма паракан пособи калăпăшĕ мĕн чухлĕ пулать?

–Ĕçлекен граждансен вăл ачана пăхма паракан отпуска иличчен 12 календарлă уйăхра илнĕ вăтам ĕç укçин 40 процентĕ чухлĕ пулать. Çав вăхăтрах çак виçе пĕрремĕш ачана пăхма паракан отпуск вăхăтĕнче 1500 тенкĕрен, иккĕмĕш тата малаллахи ачасене пăхма паракан отпуск вăхăтĕнче 3000 тенкĕрен кая пулмалла мар. Пособи виçи пĕр тулли календарьлĕ уйăхшăн 6 пин тенкĕрен иртмелле мар.

Ĕçлемен граждансен вара пĕрремĕш ачана пăхнăшăн асăннă пособи 1500 тенкĕ, иккĕмĕш тата малаллахи ачасене пăхнăшăн 3 пин тенкĕ пулать.

–Енчен те пĕр ача çулталăк çурăна çитиччен çемьере тепĕр ача çуралсан?

– Çемьере çулталăк çурăна çитичченхи ачасем пĕрре кăна мар пулсан, çак тапхăра çитиччен пăхнăшăн паракан пособие кашни ачашăн параççĕ. Енчен те асăннă пособие вăтам ĕç укçине тĕпе хурса шутласан вара кашни ачашăн паракан хушса шутланă сумма уйăхри вăтам ĕç укçинчен ытлашши пулмалла мар. Çав вăхăтрах çав сумма кашни ачашăн хушса шутланă чи пĕчĕк суммăран пĕчĕк пулмалла мар. Калăпăр, хĕрарăм çулталăк çурăна çитиччен пĕр ачипе килте ларать. Уншăн вăл 1500 тенкĕ илет. Çав хушăрах вăл тепĕр ача çуратсан, уншăн 3 пин тенкĕ илме пуçлать. Çапла вара икĕ ачишĕн 4500 тенкĕ пособи илсе тăрать.

– Усалли ан пултăр та-ха, енчен те ача ашшĕ-амăшĕсĕр юлсан?

–Енчен те ачана ытти тăванĕсем пăхаççĕ пулсан, вĕсен те çак пособие илме право пур. Вĕсем обязательнăй майпа социаллă страхланман пулсан та. Калăпăр, ачана пăхакансем пенсионерсем е ĕçлемен çынсем пулсан та.

–Сирĕн пата ку ыйтупа хăш вăхăтра килмелле?

–Ку тĕлĕшпе улшăнусем çук. Саккунпа килĕшӳллĕн ачана пăхма паракан пособие палăртма йывăр çын пулнăшăн тата ача çуратнăшăн паракан отпуск вĕçленсен, ача çуралсан, ача çулталăк çурăна çитиччен 6 уйăхран кая юлмасăр килмелле. Кун пек чухне ăна асăннă пособие малтан илмен уйăхсемшĕн те параççĕ.

Тата çакна каласа хăварасшăн. Иккĕмĕш тата малалла çуралакан ачасене пăхнăшăн пособи виçине палăртнă чух малтан çуралнă (усрава илнĕ) ачасене шута илеççĕ.

Енчен те амăшне малтан çуралнă ачасен тĕлĕшпе амăшĕн правинчен хăтарнă пулсан, халь çуралнă ачашăн пособи виçине палăртнă чух малтанхи ачисене шута илмеççĕ.

–Тавах, Нина Пантелеевна, калаçушăн.

Л.ПАВЛОВА калаçнă.